Пил-пехил сана, тăванăм,
Çитермешкĕн ĕмĕтне.
Тăшмансем сахал айванăн,
Ăслăн – пĕтмĕ ĕмĕрне.

Ӳстĕрех вĕсен хисепĕ, -
Хăррăн пăх та иртсе кай.
Çавăн пек сенетĕп эпĕ -
Тем те курнă Хусанкай.

Аслă чăнлăхшăн тăратпăр –
Халăх ирĕклĕхĕшĕн.
Çунакан чуна вăй патăр
Ĕçĕн ĕмĕрлĕхĕшĕн!

Геннадий Волкова халалланă сăвăран. 1968 çул.

Эп тухрăм çĕрле пĕчченех хулана.
Трибуна тавра ялавсем варкăшаççĕ...
Нихçан пулмана, ĕмĕрне пулмана
Юлать чĕрере Шупашкарăн хăш каçĕ.

Хула çывăрать. Шупăр пек юр шап-шур.
Пахча укăлчи тăрăх чаплă сăнсем:
Çулпуçĕсемпе пĕр ретре, юнашар –
Сухаллă е тутăрлă хамăр çынсем,

Эп тăтăм вăрах тинкерсе тавралла,
Итлерĕм каçхи сасă-чĕвĕсене.
Çил кăнтăр енчен-мĕн, вĕрет вăл мартла;
Çурхи хал-хавал капланни сисĕнет.

Ку – ĕмĕрлĕхех чĕрлессе, тетĕп эп,
Тек ман çĕршыва хурас çук алă хĕн.
Пĕр чаплă хăнан саламне асилеп.
Kаларĕ вăл: «Аслă чăваш халăхĕ».

Мĕнле вĕренмен, хăнăхман чап-мухтав!
Чĕрем тăвăлса кăмăл хуçăлчĕ ман.
Анчах, кам пĕлет, тепĕр чух хурлăх та
Пулать пахарах çăмăл савăнăçран...

(Пĕрремĕш хут пичетленет).